

# Йывăç тымарĕпе çирĕп, этем – çемйипе

2024 Çемье çулталăкĕ

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет. Авторĕ – Ирина Яковлева

## Пурнăçра чи хакли – çемье

**Эпир, Архиповсен çемйи, Мăн Хирлеп ялĕнче пурăнатпăр. Аттепе аннен мулĕ тата пурнăç пĕлтерĕшĕ – виçĕ ачи. Пирĕнте вĕсен савăнăçĕ, пирĕнте вĕсен телейĕ.**



Архиповсен çемйи.

Анне – кил-çурт çутти, вучах ăшши. Сăпайлă та пултаруллă вăл. Çут тĕнче ăна ĕçченлĕх парнеленĕ. Нумай çул Элĕк салин тĕп больницинче вăй хурать. Хирурги уйрăмĕн пациенчĕсем Ирина Николаевна медсестра пулăшу парасса чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Чирлĕ çынсен суранĕсене çыхса ярать, укол тăвать, эмел ĕçтерет, капельница та лартать вăл. Анне хавшак сывлăхлисене ура çине тăратма пултарнишĕн эпĕ савăнатăп, унпа мăнаçланатăп.

Ал ĕçне те ăста пирĕн сывăх çыннăмăр. Пушă вăхăтра мунчала, нуски çыхать, бисерпа ӳкерчĕксем тĕрлет. Чечексене питĕ юратать. Вăл лартнă розăсем, хризантемăсем кĕрхи кунсенче те вăйлă çурăлаççĕ, хитрелĕхĕпе чуна савăнтараççĕ.

Атте, Павел Павлович, аш-какай комплексĕнче хуралçăра ĕçлет. Ун аллинче кирек мĕнле ĕç те вылять. Техникăна юратать вăл, ăна юсама ăста. Пĕр пахча тутлă та сĕтеклĕ хăмла çырли ӳстерет. Картиш тулли выльăх усрать. Канмалла пулла çӳрет. Уланкă, карас, карп, çăрттан тытса çитерет. Атте пирĕншĕн тăрăшнине эпир кашни кунах куратпăр, çемйине хытă юратнине туятпăр.

Хамăн пиччепе тата шăллăмпа мухтанатăп. Вĕсем ман хӳтĕлевçĕсем. Кирилл 9-мĕш класра вĕренет. Пултаруллă арçын ача. Мĕн пĕчĕкрен сцена çинче. Хитре ташлать, илемлĕ юрлать. Кĕнекепе питĕ туслă. Миçе çĕр кĕнеке вуласа тухман пулĕ вăл!

Виçĕ çулти Егор – садик ачи. Машина-тракторпа выляма юрататать. Çитĕнсен ăста водитель пулать ĕнтĕ. Урамри хăйăр купи теттесемпе тулсах ларнă. Темĕн чухлĕ «техника» шăллăмăн кунта. Аннепе Егор пĕр кунта çуралнă. Аван уйăхĕн 27-мĕшĕнче тăвансене пухса иккĕшне те çуралнă кун ячĕпе саламларăмăр, менелник кукли çирĕмĕр. Сывлăхпа пĕрле çӳрĕр, хаклă çыннăмăрсем! Мĕн ĕмĕтленни пурнăçлантăр!

Çемьере чи хисеплĕ çын – кукамай. Вăл пирĕн килйыш тайăмĕ. Ватă çын килте пулсан пӳрт те ăшăрах. Кирек мĕнле кăткăс ыйтăва та татса пама пулăшать. Çав тери ăслă та ĕçчен хĕрарăм. Нумай çул колхоз фермин заведующийĕнче тăрăшнă, ĕне сунă. Доярка ĕçĕ йывăррине эпир кукамай каласа панинчен пĕлетпĕр. Çирĕп чунлисем, йывăрлăхсенчен хăраманнисем, явапламăха туяканнисем çеç çак ĕçре вăрах вăхăт вăй хума пултараççĕ тесе шутлатăп. Кукамай, чăнах та, маттурскер, хастарскер! Çулланнă çын пулсан та ĕç майне пĕлет вăл. Кил картинче кăштăртатса çӳрет. Хур-кăвакал, бройлер пăхать, пахчара тирпейлĕх тытать. Ырă кăмăллăскерне пурте юрататпăр, ял çыннисем те ăна хисеплеççĕ.

Эпĕ 6-мĕш класс ачи кăна, анчах пурнăçра чи хакли çемье пулнине питĕ лайăх ăнланатăп. Тăвансене юрату, ăнлану, хире-хирĕç пулăшу, сумлăх пурнăç çулĕпе малалла çирĕппĕн утма пулăшнине пĕлетĕп. Ӳссен виççĕмĕр те чăн-чăн çынсем пуласса шанатăп.

**Софья АРХИПОВА,**
**Чăрăшкас Хирлеп шкулĕ**



Фадеевсем.

## Ачасен сассипе телей тулли...

**Хĕрарăм – пурнăçăн тĕшши, çĕнĕ чуна кун çути парнелекен. Анчах та хальхи саманара çемье чăмăртасан та хăшпĕрисем ачапчаллă пулма васкамаççĕ. Çĕршывра «чайлдфри» текен юхăм сарăлни сисчĕвлентерет. Вăл ачасăр пурнăçа пропагандăлать. Паянхи хĕр-упраç кил вучахĕн управçи пулма васкасшăнах мар.**

«Çемйĕре лайăх пăхса усрăр: çемье вăл – халăх чаракĕ, патшалăх чаракĕ... Çемьесен лăпкă пурнăçĕ пире пурнăç хыттинчен хӳтĕлесе тăрать. Килĕштерсе тĕреклĕ тăракан çемьешĕн катаран килекен пурнăç синкерĕсем хăрушă мар», – тенĕ чăваш халăхне çутта кăлараканĕ И.Яковлев. Пĕр ача – çук ача, икĕ ача – çур ача, виçĕ ача – пĕр ача, теççĕ тата халăхра. Анчах та «чайлдфри» юхăмра тăракансем ачасăр пурнăç ыррине, хăйсем çамрăк ăрăва юратманнине çирĕплетеççĕ. Ку пурнăç йĕркине пропагандăлакансем, влаç тытăмĕнчисен шучĕпе, демографие, çемье хаклăхĕсене хăрушлăха кĕртсе ӳкереççĕ. Çавăнпа та «чайлдфри» юхăма Раççейре чарасшăн. Ачапча кирлĕ мар текен идеологине уççăн саракансене (тĕслĕхрен, социаллă сетьсенче) малашне штраф тӳлеттересшĕн. Ун виçи пĕчĕк мар. Уйрăм çынсене 400 пин тенкĕ, должноçрисене 800 пин, организацисене 5 миллион тенкĕ таран штрафлĕç. Саккуна пăсакансемпе МВД тата Роскомнадзор ĕçченĕсем ĕçлĕç.

Ача пулсан тӳпе те янкăртарах, пурнăç та хаваслăрах. Сывлăх енчен хавшак пулмасан, çемье чăмăртасан пепкене çут тĕнче парнелесси – ашшĕпе амăшĕн таса тивĕçĕ.

– Пурнăç тĕшши мĕнре? Çемьере, ачасенче, – тет Вăрнар поселокĕнче пурăнакан Валентина Фадеева. Мăшăрĕпе вăл 3 ачана çут тĕнче парнеленĕ.

**Елена ГРИГОРЬЕВА**

## Нумай ачаллисене – çăмăллăхсем

**Нумай ачаллă çемьесене хӳтлĕхе илессипе Чăваш енре сахал мар тăрăшаççĕ. Вĕсене тĕрлĕ енлĕ пулăшу кӳресси тимлĕхрех.**

Апрель уйăхĕнче, акă, йышлă ача ӳстерекен мăшăрсене удостоверени парассине улшăнусем кĕртнĕччĕ. Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе ку правăна чылай анлăлатнă. Унта удостоверенипе 23 çулчченхи, куçăмлă майпа вĕренекен ачасем (усрава илнисем те) пур çемьесене те тивĕçтермеллине пăхса хăварнă. Нумай ачаллине çирĕплетекен удостоверение илме заявление Патшалăх тата муниципаллă тивĕçтерӳсен пĕрлĕхлĕ порталĕ урлă яма юрать.

Ку улшăнусем – «Демографи» наци проекчĕ йĕркипе кӳрекен пулăшу майĕсен хушма мери. Вĕсем чылай çăмăллăх параççĕ. Удостоверени илнисем, акă, тӳлевсĕр е льготăсемпе усă курса культура тата спорт учрежденийĕсене çӳреме пултараççĕ.

## Ăнланулăха упраса хăварма пулать

**Çемье çулталăкĕнче ырă пулăм сисĕнет: Чăваш енре уйрăлакан мăшăрсен хисепĕ чакнă. Кăçалхи сакăр уйăхра, акă, уйрăлусене пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен 6,5 процент сахалрах регистрациленĕ.**

Арçынпа хĕрарăм хушшинчи çирĕп те телейлĕ пĕрлĕх кирек хăш вăхăтра та пурнăçра чи пĕлтерĕшли пулнă та, пулать те. Туйăмсене куç пек упраса, ача-пăчана тивĕçлĕ ӳстерсе нумай çул килĕшӳре пурăнасси вара иккĕшĕнчен те килет. ЗАГС органĕсем палăртаççĕ: мăшăрланăва кĕрекен çамрăксен нумай чухне çемье хутшăнăвĕсене йĕркелемелли опыт çителĕксĕр. Çавăнпа та ăнлануллă та туслă çемье çавăрма, ăна упрама пулăшас тĕллевпе республикăра «Яланлăх пĕрле – çемье пурнăçĕн тĕп тĕллевĕ» проект малалла ĕçлет.

Акă, ун йĕркипе ЗАГС органĕсен площадкисенче психологсем ятарласа тĕлпулусем иртереççĕ, çемье ăнăçлăхĕ мĕнле пулмалли çинчен калаçаççĕ. Темăсене вара тĕрлисене çĕклеççĕ: пĕр-пĕрне ăнланасси, пĕр-пĕр кăткăс лару-тăрура хăвна тĕрĕс тытасси тата ытти те. Пурнăçри тĕслĕхсем çинче, сăмахран, мăшăрсем ӳпкев сăмахĕсем мар, хăйсен туйăмĕсем пирки каласа пама хăнăхаççĕ. Уççăн калаçма, кирек мĕнле çивĕч лару-тăрăва пĕрле сӳтсе явма, пĕр-пĕрне тав тума...

Кунашкал тĕлпулусене вĕренекен çамрăксене явăçтарни питĕ аван. Вĕсем пĕртăванĕсемпе, ашшĕ-амăшĕпе калаçма вĕренни, ӳпкелешмесĕр, ятлаçмасăр-вăрçмасăр пĕр-пĕрне илтме тата итлеме пĕлни те пĕлтерĕшлĕ – ача пĕчĕкрен тĕрĕс хаклăхсене ăса хывса ӳсет. Тĕлпулусене иртерекен психологсем çак формат ачасене чăннипех те кăсăклантарнине çирĕплетеççĕ. Аслă классенчи вĕренекенсем специалистсене тимлĕ итлеççĕ-мĕн, калаçăва активлă хутшăнаççĕ, хăйсен шухăшĕ-кăмăлне те пĕлтереççĕ.

Кунашкал мероприятисене хутшăнас кăмăллисен телефонпа шăнкăравласа çырăнма май пуррине пĕлтерет Чăваш Республикин юстици ĕçĕсемпе тимлекен службы. Çыхăну номерĕ: 8(8352)56-51-18.

## Сертификат суйлаççĕ

**Кăçалтан Чăваш енри нумай ачаллă çемьесен тӳлевсĕр çĕр участокĕ вырăнне 250 пин тенкĕлĕх сертификат илме май пур.**

Ăна тивĕçме ашшĕ-амăшĕн вырăнти хăйтытăмлăх органĕсенче пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма учетра тăмалла.

Республикăра юлашки 9 уйăхра 651 çемье çĕр участокĕ вырăнне сертификат суйланă. Тӳлевсен пĕтĕмĕшле сумми 109,2 млн тенкĕпе танлашнă. 440 нумай ачаллă çемье сертификатпа усă курнă ĕнтĕ. Вĕсенчен 33-шĕ укçа-тенке пурăнмалли çурт-йĕр туянма тата хăпартма янă. 21 çемье харпăрхăй çуртне çĕклеме е хушма хуçалăх тытса пыма çĕр участокĕ туяннă. Чи нумайăшĕ – 386 çемье – патшалăх пулăшăвне кредитăн (ипотекăн) тĕп парăмне тата процентĕсене тӳлеме усă курнă.